

# Районăн харсăр çыннисем

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**«Раççей шăпи эпир миçен пулнинчен, çемьесенче тепĕр темиçе çултан миçе ача çуралнинчен, вĕсем ӳссен кам пулнинчен, çĕршыв аталанăвĕшĕн мĕн тунинчен, ватăсене епле хисепленинчен килет»,– палăртнă Раççей Президенчĕ Владимир Владимирович Путин Федераци Пухăвне янă Çырăвĕнче.**

**Социаллă ыйтусене пурнăçлассине патшалăх программисемпе çыхăнтарса пыма сĕннĕ вăл. Çынсен пурнăç условийĕсен шайне лайăхлатассишĕн яваплăха туйса, таса чунпа, законсене пăхăнса ĕçлесе пыма чĕнсе каланă.**

**Чăваш Енре халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерме хальхи меслетсемпе усă кураççĕ. Социаллă учрежденисен ĕçченĕсем патшалăхăн социаллă политикине пурнăçа кĕртес ĕçе ăнăçлă тата пысăк яваплăхпа хутшăнаççĕ.**

**«Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Пирĕн çак пысăк пĕлтерĕшлĕ историллĕ пулăмсене çӳллĕ шайра, общественноçа анлăн явăçтарса, ытти регионтан хăнасене чĕнсе савăнăçлăн паллă тумалла.**

**Çывăх вăхăтрах пирĕн социаллă пурнăçпа экономикăна хăвăрт аталантармалли программăна хатĕрлесе çитермелле. Вăл е ку çул-йĕр енĕпе пурнăçламалли мероприятисемшĕн яваплă депутатсене тата ĕç тăвакан влаç органĕсенче тăрăшакансене çакна шута илме ыйтатăп. Асăннă ыйтăва çавăн пекех общество организацийĕсемпе, муниципалитет пĕрлĕхĕсен пуçлăхĕсемпе программăна хушăмсем кĕртес тата ăна тĕплĕнрех тăвас тĕллевпе сӳтсе явмалла. Ку ĕçе кĕске вăхăтра пурнăçламалла», – тет Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев.**

**Районсенчи социаллă ĕçченсене пĕлӳпе ăсталăх кăна мар, этемĕн ятарлă пахалăхĕсем – ыр кăмăллăх, сисĕмлĕх, ăшăлăх, ыттисене хĕрхенме пĕлни кирлĕ. Йывăр лару-тăрăва лекнĕ граждансем, йышлă çемьесем, ачасем, сусăрсем тата ватăсем тĕрлĕ пулăшăва шăпах вĕсем урлă илеççĕ. «Соцĕçченсем çынсен шăпине ырă витĕм кӳме ăнтăлни йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать, ырăлăхпа тĕрĕслĕхе шанма май парать», – шухăшне пĕлтерет Тăвайри Л.Аввакумова.**

# Вăл ватăсене чун-чĕре ăшшине парнелет



♦ *Аввакумовсен çемйисем*

### Телейлĕ хĕрарăм

Юратнă мăшăр, хаклă анне, ырă юлташ, тараватлă тăван, телейлĕ хĕрарăм, пархатарлă асанне. Асăннă сăмахсем Людмила Петровнан кăмăлне яр уççăн палăртаççĕ. Ăна пĕлекенсем çакна çирĕплетме пултараççĕ. Çамрăксемпе çамрăкла, ваттисемпе ваталла пӳлпеме пĕлет вăл.

Çĕр чăмăрĕ çавраннă май этем ĕмĕрĕ те малалла та малалла шăвать. Пилĕк, вунă çул хыçа юлать, унтан – 25. Сисместĕн те, 50 çула çитетĕн. Чылайăшĕ ăна ырă ят-сумпа кĕтсе илет. Пурнăçăн çĕр тĕрлĕ пăрăнчăкĕсенчен ăнăçлă иртеççĕ харсăррисем умри сукмакпа, пысăк хавхаланупа, çутă ĕмĕтпе улттăмĕш теçеткене ваклакансем те чылайăн пирĕн хушăра. Шăпах вĕсен йышне кĕрет те ĕнтĕ район центрĕнче йăва çавăрса пурăнакан Л.Аввакумова, активлă пулнипе, ватăсене хисепленипе тăванĕсене, кӳршисене, пĕр ял çыннисене тăтăшах хавхалантарать.

1957 çулхи августăн 19-мĕшĕнче, Тăрмăш ялĕнчи хресчен çемйинче çуралнă вăл. Пилĕк ачаран асли пулнă. Кил хуçалăхри ĕçсене ытларах унăн пурнăçлама тивнĕ, ашшĕ-амăшне пулăшассинчен нихăçан та пăрăнман вăл.

– Çынна малтан итлемелле, ăнланмалла, вара тин хăвăн шухăшна пĕлтермелле. Хăвăртан аслисене нихăçан та хирĕç ан калăр, тесе вĕрентетчĕ анне. Унăн äслă сăмахĕсем паянхи кунччен те асра,–калаçăва малалла тăсрĕ савăнăçлă пит-куçлă хĕрарăм.

### Ырă кăмăллă ертӳçĕ

Тăрмăшри вăтам шкултан вĕренсе тухсан, ял хуçалăх специалисчĕ пулас ĕмĕтпе Вăрнарти техникума çул тытать. Тăван тăрăха хĕрлĕ дипломпа таврăнать пултаруллă пике. Тăвай райĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕнче агрономра, унтан кадрсемпе ĕçлекен инспекторта тăрăшать. Кĕçех вăл ĕçе йĕркелеме пĕлнине асăрхаççĕ, район администрацийĕн социаллă хӳтлĕх пайне ертсе пыма шанаççĕ ăна.

– Унта 1987 çулта ĕçлеме пуçлани асрах-ха. Тăвата çыннчĕ пайра. Пенсисем шутласа параттăмăр. 1989 çулта ватăсемпе инвалидсене социаллă пулăшупа тивĕçтерме пуçларăмăр. Ача-пăча пособийĕсем, коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме е топливо илме субсиди парассине, çуратма хатĕрленекен ĕçсĕр юлнă хĕрарăмсене пулăшассине йĕркелерĕмĕр, сахал тупăшлисене регистрацилерĕмĕр, пĕччен пурăнакан ватăсемпе интересленме пуçларăмăр. Унтан социаллă пулăшу паракан центр та ĕçлеме пуçларĕ, киле пырса пăхассине пуçартăмăр. Кушкăпа Тушкил ялĕсенче ватăсене вăхăтлăха пăхмалли уйрăмсем ĕçлеççĕ халĕ те. Пенсипе паянхи кун ятарлă управлени тивĕçтерет. Вăтăр çул хушшинче пайра чылай лайăх улшăну пулчĕ. Ĕçпе вăрçă ветеранĕсене социаллă пулăшу парас, çемьесене ача-пăча пособийĕсемпе тивĕçтерес тĕллевсем халĕ те çавах юлнă,– иртнĕ çулĕсене кăмăллăн куçĕ умне кăларчĕ район администрацийĕн халăха социаллă хӳтлĕх паракан пай ертӳçинче тăрăшнă хĕрарăм.

Ĕçленĕ май тавракурăмне анлăлатнă Людмила Петровна, ял хуçалăх институтне, кайран патшалăх служби академине вĕренсе пĕтернĕ. 2005 çулта хастарскере «ЧР халăха социаллă хӳтлĕх парассин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. «РФ ĕç министерствин хисеплĕ работникĕ» знак та илем кӳрет унăн кăкăрне. Тĕрлĕ Хисеп грамотисен шучĕ те çук. Чăннипех те тивĕçлĕ çак хисепе район администрацийĕн пайĕнче 2017 çулччен вăй хунă пултаруллă ертӳçĕ.

### Çирĕп çемье пĕрлĕхĕсем

Мăшăрĕпе, Леонид Дмитриевичпа пĕрле 38 çул пĕр çулпа утаççĕ, икĕ ывăл çитĕнтерчĕç. Асли, Дима – педагогика университетĕнчи физикăпа математика факультетĕнчен, Ваня Чăваш патшалăх университетĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă, Шупашкарта ĕçлесе пурăнаççĕ, çемьеленнĕ, ачаллă. Çемьесен пĕрлĕхĕсем çирĕпленсех пыраççĕ çапла.

Аслисене, Дмитрий Ивановичпа Екатерина Яковлевнана ĕç паллаштарнă. Д. Аввакумов I-IV Украина фрончĕ-сенче çапăçнă Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пынă вăрçăра, связист пулнă. 1945 çулта йывăр аманнă. Çĕнтерӳ кунне госпитальте кĕтсе илнĕ. «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» тата «Хăюлăхшăн» медальсемпе наградăланă. Мирлĕ пурнăçра районти кашни яла радиопа телефон çыхăнăвĕсемпе тивĕçтерессишĕн тăрăшнă. СССР çыхăну министерствин Хисеп грамотине, «Хисеп палли» орден, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Министрсен Кабинечĕн тата районăн Хисеп грамотисене, Тав хучĕсене илме тивĕçлĕ пулнă Дмитрий Иванович.

Унăн мăшăрĕ, Екатерина Яковлевна – тыл ĕçченĕ, ĕç ветеранĕ, вăрçă вăхăтĕнче колхозра, 1944 çултан пуçласа мĕн канăва кайиччен Тăвайри почта çыхăнăвĕн узелĕнче тăрăшнă. 1948 çулта туй туса пĕрлешнĕ те вĕсем, 72 çул ĕнтĕ пĕр-пĕрне кăмăлласа пурăнаççĕ.

– Ватăсене сума сăватăр пулсан, чăннипех те хисепе тивĕçлĕ ĕнтĕ эсир, Людмила Петровна, телейлĕ, – калаçăва тăсрăм малалла.

– Телей... Юратнă мăшăрпа ачасем, мăнуксем ырă-сывă. Чи пархатарлă ĕçре тăрăшма, вăтăр çул хушшинче чылай çынран тав сăмахĕсем илтме тӳр килчĕ. Тата Дмитрий Ивановичпа, Екатерина Яковлевнапа 38 çул пĕр чĕлхе тупса пурăнатпăр пĕрле. Çакăнтан пахи çук пулĕ,– хуравларĕ хĕрарăм.

Куçĕсем йăлкăшма пуçланăран вăл хăйне телейлĕ туйнине ăнлантăм.

Виçĕ çул каялла юратнă ĕçĕнчен уйрăлнă Л.Аввакумова, тивĕçлĕ канăва кайнă.

– Çитет, çамрăксене çул памалла, вĕсем пирĕнтен те иртерччĕр, – тет вăл.

Пай ертӳçин тилхепине, çирĕп тытма сунса, пĕрле ĕçленĕ Светлана Николаевна Порфирьевана шаннă Людмила Петровна.

### Социаллă хӳтлĕх паракан пайра

Тăвай енре те халăха социаллă хӳтлĕх парасси вăйланса пырать. 2019 çулта 5850 çын е районăн пĕтĕм халăхăн 42 проценчĕ 66 млн. тенкĕлĕх социаллă пулăшу илнĕ. 2167 çын ĕç ветеранĕ шутланать.

Районта наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе ĕçленĕ май халăх пурнăçне лайăхлатса пыма, ялсене çĕнĕ сăн-сăпат кĕртме, çынсене хӳтлăх туса пама тăрăшаççĕ.

Кăçал эпир Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине уявлатпăр. Пирĕн районтан 5429 çын вăрçа тухса кайнă, 3156-шĕ çапăçу хирĕнчен каялла таврăнайман. Пĕр çемьерен виçĕ е ытларах çын пуçĕсене хуни те пулнă. 3712 ентешĕн паттăрлăхне орденсемпе, медальсемпе палăртнă. Мучарти Петр Харитонович Бухтуловпа Ямпулатри Семен Васильевич Коновалов пирĕншĕн яланах хăюлăхпа паттăрлăх мухтавĕ пулса тăраççĕ, Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă вĕсене. Тăшман амбразурине хăйĕн ӳчĕпе хупласа вилнĕ Кармал çамрăкĕ Николай Афанасьев та ĕмĕрлĕхе асра.

– Тăвай енри 192 çын, çак шутра 7 вăрçă участникĕ, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2019 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнчи 277 номĕрлĕ Указĕпе килĕшӳллĕн «1941 – 1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул» юбилей медальне илме тивĕçнĕ, тата «Тăвай районĕн хисеплĕ ветеранĕ» знакпа чыслансă ватăсене. Асăннă наградăсене Людмила Петровнан мăшăрĕн ашшĕпе амăшне, Дмитрий Ивановичпа Екатерина Яковлевнăна та панă.

Самантпа усă курса çакна та асăнса хăвармалла. Коронавирус эпидемийĕ вăхăтĕнче пирĕн районти халăха социаллă хӳтлĕх паракан пая «хĕрӳ лини» телефонĕпе (8 835 48) 2-18-34 шăнкăравлама пултаратăр.

Хăрушлăх ушкăнне кĕрекен граждансене – 65 çултан аслăраххисене, вăраха кайнă чирсемпе аптăракансене, çие юлнă хĕрарăмсене самоизоляци режимне пăхăнма ыйтатпăр, вĕсем пирĕнпе дистанци мелĕпе усă курса çыхăнма пултараççĕ. 8–17 сехетсенче (апат вăхăчĕ 12–13 сехетсем) тĕрлĕ информацисем илме май пур.

Тимлĕ пулăр, çынсемпе тĕл пулассинчен пăрăнăр, урама сăлтавсăр ан тухăр. Вирус сывлăшпа кăна мар, пĕр-пĕрне алă тытсан та е йăлари япала урлă та сарăлать. Хăвăра тата çывăх çыннăрсене упрăр, – хăйсен ĕçĕпе кĕскен паллаштарнă май, коронавирус тапхăрĕнче пурне те тӳсĕмлĕ пулма чĕнсе каларĕ халăха социаллă пулăшу паракан пайăн хальхи ертӳçи С.Порфирьева.

Çак сăвапллă ĕçре ăна Т.Разина, С.Соловьева, Н.Гаврилова, Т.Дмитриева пулăшаççĕ. Людмила Петровнана çирĕп сывлăх сунаççĕ вĕсем.

Сисĕмлĕхпе чун-чĕре ăшшине хăйсем тивĕçтерекен çынсене куллен парнелет асăннă коллектив.

**А.НИКИТИНА.**